27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
11
ЫТЛАРИКУН
136(6631) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, утлă ҫар тата танксемпе пехота ăста маневр тунипе, ЛИДА хулине, пысăк чугун ҫул узелӗ тата нимӗҫсен ГРОДНО хули енчи оборонин паха тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тăраканскерне, туртса илнӗ.

ЛИДА хулине туртса илессишӗн пынă ҫапăҫусенче ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЧЕПУРКИН генерал-майорăн, БРИКЕЛЬ генерал-майорăн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорăн кавалерисчӗсем; танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн РОДИНАН, НУЧИН подполковникăн, КАРПОВ подполковникăн, ДОРОНИН подполковникăн, БРИЛОВ майорăн, ГАЙДАЛЕНКО майорăн танкисчӗсем; ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантăн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантăн, КОВТУНОВ полковникăн, ДУДКА полковникăн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн НЕФЕДОВАН артиллерисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн БЕЛЕЦКИН, КИТАЕВ полковникăн, СТАЛИН полковникăн, КОЖЕМЯКИН полковникăн летчикӗсем; СОЛЯНКИН майорăн саперӗсем тата ФЕДОРОВ подполковникăн связисчӗсем чапа тухнă.

Тунă ҫитӗнӗве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЛИДА хулине туртса илессишӗн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «ЛИДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлӗн 9-мӗшӗнче, 22 сехетре, хамăр Тăван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тăватă тупăпа вунинӗ хут пӗр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтăн паттăр ҫарӗсене, ЛИДА хулине туртса илнӗскерсене, Тăван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Пиртӗ чаплă ҫапăҫнăшăн эсир ертсе пыракан ҫарсене, ЛИДА хулине ирӗке кăларассишӗн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫӗршывăн ирӗклӗхӗпе никама пăхăнманлăхӗшӗн ҫапăҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ **И. СТАЛИН.**

1944 ҫулхи июлӗн 9-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ШАРА шывӗ урлă 60 километр тăршшӗ участокра каҫса кайнă та СЛОНИМ хулине —ҫулйӗрсен пысăк узелӗ тата нимӗҫсен ШАРА шывӗ ҫинчи оборонин хăватлă тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тăраканскерне — туртса илнӗ.

Ҫавăнпа пӗр вăхăтрах Пинск хули енче фронт ҫарӗсем, Днепр шывӗ ҫинчи ҫар флотилийӗ пулăшнипе, ЛУНИНЕЦ хулине — Полесьери паха чугун ҫул узелне туртса илнӗ.

ШАРА шывӗ урлă каҫнă чух тата СЛОНИМ хулипе ЛУНИНЕЦ хулине туртса илессишӗн пынă ҫапăҫусенче БАТОВ генерал-полковникăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, РОМАНЕНКО генерал-лейтенантăн, БЕЛОВ генерал-лейтенантăн, АНДРЕЕВ генерал-майорăн, ГАРЦЕВ генерал-майорăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорăн, ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорăн, ШВАРЕВ генерал-майорăн, ЯНОВСКИЙ генерал-майорăн, БУЛАТОВ генерал-майорăн, САННОВСКИЙ генерал-майорăн, ГРЕБЕННИК генерал-майорăн, ФРОЛЕНКОВ генерал-майорăн, ДАНИЛОВ генерал-майорăн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорăн, КОРЧИНОВ генерал-майорăн, ОПЯКИН полковникăн, ЛУКИН подполковникăн, ПЕТРОВСКИЙ полковникăн, МОРОЗОВ полковникăн, ДЖАНДЖГАВА полковникăн, ПЕТУНИН полковникăн, БАСТЕЕВ полковникăн, СМЕКАЛИН подполковникăн, ЧЕРНОУСЕНКО подполковникăн, ТАРАНЕНКО подполковникăн, ВИНОКУРОВ подполковникăн, ШМЫГЛЕВ полковникăн ҫарӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн, ТУТАРИНОВ генерал-майорăн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорăн Кубань казакӗсен утлă ҫар соединенийӗсем; танковăй ҫарсен генерал-майорӗн БАХАРОВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КРИВОШЕИНАН, БОЙКО подполковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, БАРАНЮК подполковникăн, ТРУШКИН подполковникăн, ХЛЮПИН полковникăн, ГАВРИЛОВ полковникăн, КУЛИКОВ полковникăн, ЛОЖКИН подполковникăн, ВАСИЛЬЕВ подполковникăн, РЫЖАНОВ подполковникăн танкисчӗсем; ВОСКРЕСЕНСКИЙ полковникăн, ГОРОДОВЕНКО полковникăн, СВЕНЦИЦКИЙ подполковникăн, СЕРГЕЕВ подполковникăн, ТАРАСОВ подполковникăн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн ДЗУСОВАН, ВИНОГРАДОВ полковникăн летчикӗсем; Днепр шывӗ ҫинчи ҫар флотилийӗн 1-мӗш рангри капитанăн ГРИГОРЬЕВАН, 2-мӗш рангри капитанăн МИТИНАН чаҫӗсем; ПЕТРОВ полковникăн, ЛИСИЦКИЙ майорăн, БЕЛЯКОВ майорăн, НИКОЛАЕВ подполковникăн, ФРАНЧУК инженер-капитанăн саперӗсем тата ҫыхăну ҫарӗсен генерал-майорӗн ЛИТВИНЕНКĂН, БОРИСОВ полковникăн, ПЛЮТКИН полковникăн связисчӗсем чапа тухнă.

Тунă ҫӗнтерӗве яланлăха палăртса хăварас тесе, ШАРА шывӗ урлă каҫнă чух тата СЛОНИМ хулипе ЛУНИНЕЦ хулине туртса илессишӗн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «СЛОНИМСКИ», «ЛУНИНЕЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлӗн 10-мӗшӗнче, 23 сехетре хамăр Тăван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икӗҫӗр ҫирӗм тăватă тупăпа ҫирӗм хут пӗр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтăн паттăр ҫарӗсене, ШАРА шывӗ урлă каҫнăскерсене тата СЛОНИМ хулипе ЛУНИНЕЦ хулине туртса илнӗскерсене, Тăван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Пиртӗ чаплă ҫапăҫнăшăн эсир ертсе пыракан ҫарсене, ШАРА шывӗ урлă каҫнă чух тата СЛОНИМ хулипе ЛУНИНЕЦ хулине ирӗке кăларассишӗн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫӗршывăн ирӗклӗхӗпе никама пăхăнманлăхӗшӗн ҫапăҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ **И. СТАЛИН.**

1944 ҫулхи июлӗн 10-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 9-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПЕТРОЗАВОДСК хулинчен хӗвеланăҫнерехре тăшманпа ҫапăҫса малалла куҫса пынă, 20 ял ытла туртса илнӗ, вăл шутра — ЛАХТА, КАНЧИ-СЕЛЬГА, САВИЛАТЧИ, УРМА, УСИКЮЛЯ.

БАЛТИКА тăрăхӗнчи 1-мӗш фронт ҫарӗсем ăнăҫлă наступлени туса пынă, Вилейка облаҫӗнчи район центрӗсене БРАСЛАВ хулине, ВИДЗЕ хулине тата ПОСТАВЫ хулине, ЛИТВА ССР-ӗн уезд центрне СВЕНЦЯНЫ хулине, ЛЫНТУПЫ чугун ҫул узелне, ДРУЯ хулине туртса илнӗ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан ытти 700 пункта ытла йышăннă.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем ЛИДА хулипе пысăк чугун ҫул узелне туртса илнӗ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЗАСТЕНКИ, ВОЙДАТЫ, ТЕРМЯНЫ, ПОРУДОМИНО, ЯШУНЫ, ТУРГЕЛИ, БОЛЬШИЕ СОЛЕЧНИКИ, ГЕРАМОНЫ, ДОКУДОВО ятлă пысăк ялсем тата ПОНАРЫ, ПОРУБАНОК, ГАВЬЯ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем ҫаплах ВИЛЬНЮС хули урамӗсенче ҫапăҫнă.

МИНСК хулинчен хӗвелтухăҫнерехре БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах тăшманăн ҫавăрса илнӗ ушкăнӗсене пӗтерсе тăвассишӗн ҫапăҫнă. Июлӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем 6.530 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткăна илнӗ. Пирӗн чаҫсене нимӗҫсен 57-мӗш пехотнăй дивизийӗн командирӗ Тровиц генерал-майор тыткăна парăннă.

ВОЛКОВЫСК хули енче БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, наступление вăйлатса пырса, Барановичи облаҫӗнчи район центрӗсене НОВОГРУДОК хулипе ДЯТЛОВО хулине туртса илнӗ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВСЕЛЮБ, ВАСИЛЕВИЧИ, БЕРЕЗОВКА, ОХОНОВО, НОВОЕЛЬНЯ, ДВОРЕЦ ятлă пысăк ялсем тата НОВОГРУДОК, ЗАРОЙ, КОРИЦА, НОВОЕЛЬНЯ, ДВОРЕЦ чугун ҫул станцийӗсем.

БАРАНОВИЧИ хулинчен хӗвеланăҫнерехре тата кăнтăрхӗвеланăҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынă, тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан 70 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЛЮШНЕВО, СВИРЯНЫ, МАЛАЯ ПОЛОМКА, ВЫШЕВА ДЕРЕВНОЕ, НАГУЕВИЧИ, ТАРТАК, ЛЕСЬНА, НОВОПОЛЬНА, ДОБРОМЫСЛЬ, ВУЛЬКА ятлă пысăк ялсем тата МОРДЫЧИ, МИЦКЕВИЧИ, МОЛЧАДЬ, ПОЛОНКА, ЛЕСЬНЯ чугун ҫул станцийӗсем.

ПИНСК хулинчен хӗвелтухăҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ, вăл шутра — МИКАШЕВИЧЕ, СИНКЕВИЧЕ, ЛАХВА, ДРЕБСК, КОЖАНГРУДЕК, СТАХУВ, ПЛОТНИЦА, ТЫРВОВИЧЕ, ОВСЕМИРУВ ятлă пысăк ялсем тата МИКАШЕВИЧЕ, СИНКЕВИЧЕ, ЛАХВА чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтăн ытти участокӗсенче палăрнă улшăнусемех пулман.

Июлӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 21 танкне ҫӗмӗрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 43 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ БЕЛОСТОК, КАЙШАДОРЫ, ОРАНЫ, ГРОДНО ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛӖСЕМ ҪИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлӗн 9-мӗшӗ. ыран тепӗ чух ҫӗрле пирӗн авиаци, йышлăн вӗҫсе кайса, Белосток чугун ҫул узелне тапăннă. Нимӗҫсен пӗр ҫӗре пухăнса тăнă ҫар эшелонӗсем ҫине тата тăшманăн ҫар склачӗсем ҫине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе чугун ҫул узелӗн хӗвеланăҫ пайӗнче боеприпассем тиенӗ поезд тата боеприпассен пысăк склачӗ сирпӗнсе кайнă. Чугун ҫулсем ҫинче пушарсем тухнă, нимӗҫсен ҫар хатӗрӗсем тиесе лартнă вагонӗсемпе платформисем ҫуннă.

Кайшадоры чугун ҫул узелӗ ҫине (Каунас хулинчен хӗвелтухăҫнерехре), Ораны ҫине (Вильнюс хулинчен кăнтăрхӗвеланăҫнерехре) тата Гродно чугун ҫул узелӗ ҫине бомбăсем пăрахнине пула, тăшманăн темиҫе эшелонӗ ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Пушарсем тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Конев маршала колхозниксем панă парне

КИРОВ, июлӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Совет Союзӗн Маршалӗ Иван Степанович Конев Киров облаҫӗнчи Подосиновски районра ҫуралса ӳснӗ. Ҫак районри ӗҫҫыннисем хăйсен чаплă землякне парне пама шут тытнă. Вӗсем Конев Маршал командир пулса ертсе пыракан фронт валли «Подосиновски колхозник» ятлă танковăй колонна тума хăйсен перекетленӗ укҫитенкине параҫҫӗ. Госбанкăн районри отделенине 410.000 тенкӗ укҫан тата государство заемӗсен облигацийӗсене 458.000 тенкӗлӗх хывнă та ҫитӗ. Пӗр «Стрела» ялхуҫалăх артелӗн колхозникӗсем кăна 130.000 тенкӗ панă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшӗсене государство енчен пулăшассине ӳстересси, ача амăшӗсен тата ачасен пурнăҫне сыхлас ӗҫе вăйлатасси ҫинчен, „Ача амăшӗ—героиня“ тесе хисеплӗ ят тăвасси, „Ача амăшӗн мухтавӗ“ ятлă орден тата „Ача амăшӗсен медалӗ“ ятлă медаль тăвасси ҫинчен

Ачасемпе амăшӗсемшӗн тата ҫемьене ҫирӗплетессишӗн тăрăшасси яланах Совет государствин чи пысăк задачисенчен пӗри пулнă. Амăшӗне ачан интересӗсене сыхласа, государство йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсемпе ача амăшӗсене хăйсен ачисене пăхса усрама тата вӗрентсе ӳстерме пысăк пулăшу парса тăрать. Вăрҫă вăхăтӗнче тата вăрҫă хыҫҫăн, нумай ҫемьесемшӗн чылай йывăрлăхсем пулнă вăхăтра, вӗсене государство енчен пулăшассине малалла анлăлатни кирлӗ.

Йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшӗсене материальнăй пулăшу парассине ӳстерес, нумай ачапа пурăннине ырласа пулăшас тата амăшӗсемпе ачасен интересӗсене сыхлассине вăйлăлатас шутпа, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ ҫапла йышăнать:

I

Нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшӗсене государство паракан пулăшăва ӳстересси ҫинчен

1. Ҫакăн пек йӗрке тăвас: нумай ачаллă амăшӗсене (упăшкаллисене тата тăлăх пурăнаканнисене), вӗсен икӗ ача пур пулсан, виҫҫӗмӗш ача тата ун хыҫҫăнхи ытти ачасем ҫуралнă чухне государство пособине параҫҫӗ. Халичченхи йӗрке тăрăх, государство пособине нумай ачаллă амăшӗсене, вӗсен ултă ача пур пулсан, ҫиччӗмӗш ача тата ун хыҫҫăнхи ытти ачасем ҫуралсан панă.

2. Нумай ачаллă амăшӗсене государство пособине ҫакăн пек йӗркепе тата ҫакăн чухлӗ тӳлеҫҫӗ:

	Пӗр вăхăтлăха.	Кашни уйăхрах.
Икӗ ача усракан амăшӗсене виҫҫӗмӗш ача ҫуралсан	400 тенкӗ	—
Виҫӗ ача усракан амăшӗсене тăваттăмӗш ача ҫуралсан	1.300 тенкӗ	80 тенкӗ
Тăватă ача усракан амăшӗсене пиллӗкмӗш ача ҫуралсан	1.700 тенкӗ	120 тенкӗ
Пиллӗк ача усракан амăшӗсене улттăмӗш ача ҫуралсан	2.000 тенкӗ	140 тенкӗ
Ултă ача усракан амăшӗсене ҫиччӗмӗш ача ҫуралсан	2.500 тенкӗ	200 тенкӗ
Ҫичӗ ача усракан амăшӗсене саккăрмӗш ача ҫуралсан	2.500 тенкӗ	200 тенкӗ
Сакăр ача усракан амăшӗсене тăххăрмӗш ача ҫуралсан	3.500 тенкӗ	250 тенкӗ
Тăхăр ача усракан амăшӗсене вуннăмӗш ача ҫуралсан	3.500 тенкӗ	250 тенкӗ
Вунă ача усракан амăшӗсене ун хыҫҫăнхи кашни ача ҫуралнă чухне	5.000 тенкӗ	300 тенкӗ

Нумай ачаллă амăшӗсене кашни уйăхрах паракан пособие ача ҫуралнă хыҫҫăн иккӗмӗш ҫулӗнче тӳлеме пуҫлаҫҫӗ те ача 5 ҫул тултариччен тӳлесе тăраҫҫӗ.

Ҫак Указа кăларнă кун тӗлне виҫӗ е тăватă ача, пиллӗк е ултă ача усракан амăшӗсене ҫак статья тăрăх палăртнă пособие ку Указа кăларнă хыҫҫăн ҫуралнă кашни ачашăн тӳлеҫҫӗ.

Ҫак Указа кăларнă кун тӗлне ҫичӗ ача е унтан та ытларах усракан амăшӗсем нумай ачаллă пулнишӗн СССР Тӗпӗҫтăвкомӗпе Совнаркомӗ 1936 ҫулхи июнӗн 27-мӗшӗнче йышăннă постановленипе кăтартнă йӗркесемпе тата унта кăтартнă чухлӗ пособи илме пултараҫҫӗ, вӗсене ҫакăн чухлӗ тӳлеҫҫӗ: ҫиччӗмӗш, саккăрмӗш, тăххăрмӗш тата вуннăмӗш ачасемшӗн — ача ҫуралнă хыҫҫăн пиллӗк ҫул хушши кашни ҫулах икшер пин тенкӗ; вунпӗрӗмӗш тата ун хыҫҫăнхи кашни ачашăн—пӗр вăхăтлăха пиллӗк пин тенкӗ тата ача ҫуралнă хыҫҫăн иккӗмӗш ҫултан пуҫласа тăватă ҫул хушши кашни ҫулах виҫшер пин тенкӗ. Ҫак Указа кăларнă хыҫҫăн ҫуралакан ытти кашни ачашăн вара вӗсене пособи Указăн ҫак статьинче кăтартнă чухлӗ тата ҫак статьяра палăртнă йӗркесемпе тӳлеҫҫӗ.

Нумай ачаллă пулнă пирки государство пособине парассипе шапас марриине палăртнă чухне Отечественнăй вăрҫă фрончӗсенче вилнӗ е пӗр хыпарсăр ҫухалнă ачасене те шута илеҫҫӗ.

3. Тăлăх пурăнакан (качча кайман) амăшӗсене ҫак Указа кăларнă хыҫҫăн ҫуралнă ачасене пăхса усрама тата вӗрентсе ӳстерме государство пособине ҫакăн чухлӗ памалла тăвас: пӗр ача валли — уйăхра 100 тенкӗ, икӗ ача валли — 150 тенкӗ, виҫӗ ача е унтан ытларах ачасем валли — 200 тенкӗ.

Тăлăх пурăнакан амăшӗсене государство пособине вӗсен ачисем 12 ҫул тултариччен тӳлесе тăраҫҫӗ.

Тăлăх пурăнакан амăшӗсене, вӗсен виҫӗ ача е унтан та ытларах пулсан, ҫак статьяра палăртнă государство пособине нумай ачаллă пулнă пирки илсе тăракан пособи сумне (ҫак Указăн иккӗмӗш статьинче кăтартнă тăрăх тӳлесе тăракан пособи сумне) хушса тӳлеҫҫӗ.

Тăлăх пурăнакан амăшӗ качча кайять пулсан, ҫак статьяра палăртнă пособие илмелли право унра сыхланса юлать.

Ҫак Указа кăлариччен ҫуралнă ачасемшӗн алимент илекен амăшӗсем вăл ача ӳсе ҫитиччен алимент илсе тăраҫҫӗ, анчах ҫак статьяра палăртнă пособие илмеҫҫӗ.

1944 ҫулта ҫак Указа кăлариччен ҫуралнă ачасен амăшӗсем, вӗсемшӗн алимент илмеҫҫӗ пулсан, ҫак статьяра палăртнă пособие илме пултараҫҫӗ.

4. Тăлăх пурăнакан амăшӗ хăй ҫуратнă ачана вӗрентсе ӳстермешӗн ача учрежденине вырнаҫтарма шутлать пулсан, ача учрежденийӗн вăл ачана пӗтӗмӗшпех государство шучӗпе пăхса усрама тата вӗрентсе ӳстерме йышăнмалла.

Ача амăшӗ кайӗн ачине пăхса ӳстерме ача учрежденийӗнчен каялла илме пултарать.

Ача учрежденийӗнче пурăннă вăхăтшăн вăл ачан амăшне государство пособийӗ тӳлемеҫҫӗ.

5. Социальнăй страховани укҫи-тенкинчен тата кооперации артелӗсен пулăшу кассисенчен халӗ кăна ҫуралнă ача валли пӗр вăхăтлăха паракан пособи хисепне 45 тенкӗрен 120 тенке ҫити ӳстерес. Ача амăшӗсене халӗ кăна ҫуралнă ача валли ҫав асăннă укҫа чухлӗ кӗпе-йӗм сутмалла тăвас.

II.

Йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсемпе ача амăшӗсене паракан ҫăмăллăхсене ӳстересси ҫинчен тата амăшӗсемпе ачасен интересне сыхлакан учрежденисен хисепне йышлăлатмалли мерăсем ҫинчен

6. Йывăр ҫын пулнă пирки тата ача ҫуратнă пирки работницăсемпе хӗрарăм-служащисене паракан отпуск вăхăтне 63 кунран 77 куна ҫити ӳстерес, отпуск тăршшӗ ача ҫуратас умӗн 35 кун тата ача ҫуратнă хыҫҫăн 42 кун чухлӗ пулмалла тăвас, ҫак вăхăтшăн малтан палăртнă чухлех государство шутӗнчен пособи памалла тăвас. Ача тӗрӗс мар ҫуралнă пулсан е йӗкӗреш ачасем ҫуралнă пулсан, ача ҫуратнă хыҫҫăн 56 кун чухлӗ отпуск параҫҫӗ.

Предприятисемпе учрежденисен руководителӗсен йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсене йывăр ҫын пулнă тата ача ҫуратнă пирки паракан отпускпа пӗр вăхăтрах черетлӗ отпуск та памалла.

7. Йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсене, вӗсем йывăр ҫын пулнăранпа тăватă уйăх иртнӗ хыҫҫăн пуҫласа, предприятисемпе учрежденисенче ӗҫ вăхăчӗ хыҫҫăн хушса ӗҫлеттерме юрамасть, кăкăр ачине пăхса усракан хӗрарăмсене ачапа кăкăр сӗчӗпе усранă вăхăтра ҫӗрлехи ӗҫсенче ӗҫлеттерме юрамасть.

8. Йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсене вӗсем йывăр ҫын пулнă хыҫҫăн улттăмӗш уйăхран пуҫласа тата кăкăр ачисен амăшӗсене вӗсем ачана кăкăр сӗчӗпе усранă чухне тăватă уйăх хушши продовольстви хушса памалли паракан нормине икӗ хут ӳстермелле.

9. Предприятисемпе учрежденисен руководителӗсене ҫапла тума хушас: йывăр ҫын пулнă хӗрарăмсене тата кăкăр ачисен амăшӗсене подсобнăй хуҫалăхсенчен продуктсем хушса парса пулăшмалла.

10. Ачасене ача сачӗсемпе яслисенче усранăшăн ҫакăн пек ашшӗ-амăшӗсене 50 процент кăна тӳлеттермелле тăвас:

виҫӗ ача усракан ашшӗ-амăшӗсем уйăхра ӗҫукҫи 400 тенкӗ таран илеҫҫӗ пулсан;

тăватă ача усракан ашшӗ-амăшӗсем уйăхра ӗҫукҫи 600 тенкӗ таран илеҫҫӗ пулсан;

пиллӗк е ытларах та ача усракан ашшӗ-амăшӗсем, вӗсем ӗҫукҫи мӗн чухлӗ илнине пăхмасăрах, 50 процент кăна тӳлеҫҫӗ.

11. СССР Халăх Комиссарӗсен Совечӗ ҫаксене тума хушас:

а) республикăсемпе облаҫсем тăрăх ача амăшӗсемпе ачасен сурчӗсем организацилемелли, ҫавăн пекех тата йывăр ҫын пулнă, тăлăх пурăнакан хӗрарăмсем валли, ачана кăкăр сӗчӗпе усракан, анчах вăйсăрланнă амăшӗсем валли ятарласа кану сурчӗсем хушса организацилемелли план туса ҫирӗплетмелле. Ҫав кану сурчӗсенче канакансене вӗсем ӗҫлеме пулмарнă ӗҫсенче ӗҫлеттерсе усă курмалла;

б) пăхса усрама тивӗҫлӗ ачасене пурне те вырнаҫтармалла туса, наркоматсемпе ведомствăсем тăрăх ача учрежденийӗсен хисепне ӳстермелли план туса ҫирӗплетмелле; ҫав планра нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кăларнă районсенче ача консультацийӗсемпе сӗт кухнисен хисепне ӳстерессине, кăкăр сӗчӗпе пурăнакан ачасем валли яслисем тата ача сачӗсем ҫумӗнче каҫсерен ӗҫлекен группăсем, ача ҫуратма пулăшакан учрежденисем организацилессине палăртса хумалла;

в) хӗрарăм ӗҫӗпе анлăн усă куракан предприятисемпе учрежденисенче ача яслисем, ача сачӗсем, кăкăр ачисене ӗмӗртмелли пӳлӗмсем тата хӗрарăмсен гигиенин пӳлӗмӗсем обязательнăй йӗркепе организацилессине палăртса хумалла;

г) наркоматсене ҫапла тума хушмалла: промышленность строительствин проекчӗсене хатӗрленӗ чухне ача учрежденийӗсем (яслисем, ача сачӗсем, амăшӗсемпе ачасен пӳлӗмӗсем) туса лартассине палăртса хумалла, вăл учрежденисем харпăрхăй предприятинчи работницăсемпе служащисен пăхса усрама тивӗҫлӗ ачисене пӗтӗмӗшпех вырнаҫтармалăх пулмалла;

д) ача учрежденийӗсем валли тата халăха сутма та ача тумтирӗ, атă-пушмак, ачасене гигиенăпа санитари енчен пăхса усрама кирлӗ хатӗрсем тата ача-пăча валли ытти япаласем туса кăларассине чылаях анлăлатмалла, ҫавăн пекех ача тумтирӗ ҫӗлекен мастерскойсен тата амăшӗсемпе ачасен магазинӗсен хисепне ӳстермелли мероприятисене палăртса ҫирӗплетмелле.

III.

„Ача амăшӗсен медалӗ“ ятлă медаль, „Ача амăшӗн мухтавӗ“ ятлă орден тăвасси ҫинчен тата „Ача амăшӗ—героиня“ тесе хисеплӗ ят тăвасси ҫинчен

12. Нумай ача ҫуратса пăхса ӳстернӗ амăшӗсене наградăлама I-мӗш тата II-мӗш степень медальсем — «Ача амăшӗсен медалӗ» ятлă медаль тăвас, вăл медальсемпе ҫаксене наградăлаҫҫӗ:

пиллӗк ача пăхса ӳстернӗ амăшӗсене—II-мӗш степень медальпе,

ултă ача пăхса ӳстернӗ амăшӗсене — I-мӗш степень медальпе.

13. Нумай ача ҫуратса пăхса ӳстернӗ амăшӗсене наградăлама I, II тата III-мӗш степень орденсем — «Ача амăшӗн мухтавӗ» ятлă орден тăвас, вăл орденсемпе ҫаксене наградăлаҫҫӗ:

ҫичӗ ача пăхса ӳстернӗ амăшӗсене — III-мӗш степень орденпа,

сакăр ача пăхса ӳстернӗ амăшӗсене—II-мӗш степень орденпа,

тăхăр ача пăхса ӳстернӗ амăшӗсене — I-мӗш степень орденпа.

14. Ҫакăн пек йӗрке тăвас: вунă ача ҫуратса пăхса ӳстернӗ амăшне «Ача амăшӗ — героиня» тесе хисеплӗ ят параҫҫӗ, унпа пӗрле ăна «Ача амăшӗ — героиня» ятлă орден тата СССР Верховный Совет Президиумӗн грамотине параҫҫӗ.

15. «Ача амăшӗн мухтавӗ» орденсемпе тата «Ача амăшӗсен медалӗ» ятлă медальсемпе ача амăшне унăн ачи пӗр ҫул тултарнă хыҫҫăн тата унăн ытти ачисем сывах пурăнаҫҫӗ пулсан наградăлаҫҫӗ. «Ача амăшӗ — героиня» текен хисеплӗ ята та ҫавăн пек чухнех параҫҫӗ.

Амăшне наградăланă чухне унăн Отечественнăй вăрҫă фрончӗсенче вилнӗ е пӗр хыпарсăр ҫухалнă ачисене те шута илеҫҫӗ.

IV

ССР Союзӗнчи авланман, пӗччен пурăнакан тата пӗчӗк ҫемьеллӗ граждансенчен налог илесси ҫинчен

16. СССР Верховный Совет Президиумӗ 1941 ҫулхи ноябрӗн 21-мӗшӗнче «ССР Союзӗнчи авланман, пӗччен пурăнакан тата ачасăр граждансенчен налог илесси ҫинчен» кăларнă Указа улăштарса, ҫакăн пек йӗрке тăвас: ҫав налога ачасăр граждансем тата пӗр ача е икӗ ача усракан гражданcем: 20 ҫул тултарнă, анчах 50 ҫулран иртмен арҫынсем тата 20

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницăра).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене государство енчен пулăшассине ÿстересси, ача амăшĕсен тата ачасен пурнăçне сыхлас ĕçе вăйлатасси çинчен, „Ача амăшĕ—героиня“ тесе хисеплĕ ят тăвасси, „Ача амăшĕн мухтавĕ“ ятлă орден тата „Ача амăшĕсен медалĕ“ ятлă медаль тăвасси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

çул тултарнă, анчах 45 çултан иртмен хĕрарăмсем тÿлеççĕ.

17. Çак налога çакăн чухлĕ илеççĕ:

а) тупăш тăрăх хунă налога тÿлекен гражданĕсенчен, вĕсен ачасем çук пулсан, — вĕсен тупăшĕн 6 процентĕ чухлĕ, пĕр ача пур пулсан — пĕр процент тата икĕ ача пур пулсан—тупăшран çур процент чухлĕ налог илеççĕ;

б) ялхуçалăх налогĕ тÿлеттерме тивĕçлĕ хуçалăха кĕрекен колхозниксенчен, единоличниксенчен тата ытти гражданĕсенчен, вĕсен ачасем çук пулсан, — çулталанкра 150 тенкĕ, пĕр ача пулсан — 50 тенкĕ, икĕ ача пулсан — çулталанкра 25 тенкĕ илеççĕ;

в) ытти гражданĕсенчен, вĕсен ачасем çук пулсан, — çулталанкра 90 тенкĕ, пĕр ача пулсан — 30 тенкĕ, икĕ ача пулсан — çулталанкра 15 тенкĕ илеççĕ.

18. Налог хурассинчен çаксене хăтарас:

а) рядовойсен, сержантсен тата старшинасен составĕнчи çар çыннисене;

б) çапăçури çарпа çапăçури флотăн составне кĕрекен çар чаçĕсемпе учрежденийĕсенчи офицерсене;

в) çак статьяри «а» тата «б» пунктсенче кăтартнă çар çыннисен арăмĕсене;

г) ачасене пăхса усрама государствăран пособи е пенси илекен хĕрарăмсене;

д) Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче ачисем вилнĕ е пĕр хыпарсăр çухалнă гражданĕсене;

е) вăтам тата аслă вĕренÿ заведенийĕсенче вĕренекенсене — 25 çулран иртмен арçынсемпе хĕрарăмсене;

ж) пĕррмĕш тата иккĕмĕш группăри инвалидсене.

V

Арлă-арăмлă пуласси пирки, çемье пирки тата ачасене пăхса усрасси пирки калакан законсене улшăнусем кĕртесси çинчен

19. Çакăн пек йĕрке тăвас: арлă-арăмлă пулнине çыртарнă пулсан кăна союзлă республикăсен арлă-арăмлă пуласси çинчен, çемье çинчен тата ачасене пăхса усрасси çинчен калакан законĕсен кодексĕсенче палăртса хунă правăсемпе обязанноçсем арăмĕпе упăшкишĕн вăйра пулма пултараççĕ.

Çак Указа кăларичченех чăннипе илсен арлă-арăмлă пулнă çынсем хăйсем арлă-арăмлă пулнине чăннипе пĕрле мĕн чухлĕ пурăннине кăтартса çыртарма пултараççĕ.

20. Ашшĕ кам пулнине çирĕплетсе пама ыйтса тата хăйсем арлă-арăмлă пулнине çыртарман çынпа çуратнă ача пăхса усрамашкăн алимент шыраса илме ыйтса амăшĕ суда парас правăна пăрахăça кăларас.

21. Çакăн пек йĕрке тăвас: качча кайнине çыртарман амăшĕ çуратнă ачана гражданĕсен пурнăçĕнчи улшăнусене çырса пыракан органсенче çыртарнă чухне амăшĕн хушамачĕпе çырса хураççĕ, ашшĕ ятне ачана амăшĕ кăтартнă тăрăх çыраççĕ.

22. Арлă-арăмлă пулнине çыртарнă чухне паспортсенче мăшăрĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне тата хăçан çыраннине, арлă-арăмлă пулни çинчен ăçта тата хăçан çыртарнине обязательнăй йĕркепе çырса хумалла.

23. Арăмĕпе упăшки уйăрăлассине пурте пĕлмелле йĕрке тăвас, уйăрăласси суд урлă пулса иртмелле. Уйăрăласси пирки пуçарнă ĕçе, кирлĕ чухне, арăмĕпе упăшки ыйтнă тăрăх, суд йышăннипе, судăн хупă ларăвĕнче итлеме пултараççĕ.

24. Уйăрăласси пирки судра ĕç пуçарнă чухне обязательнăй йĕркепе çаксене пăхăнмалла:

а) уйăрălма шутлани çинчен суда заявлени çырса памалла, унта мĕншĕн уйăрălма шутланине, çавăн пекех тата хăйĕн мăшăрĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, хăçан çыраннине тата вăл ăçта пурăннине кăтартмалла; уйăрălма шутлани çинчен çырнă заявлени пană чухне 100 тенкĕ укса шыраса илеççĕ;

б) уйăрăласси çинчен пĕр мăшăрĕ суда пană заявленине палăртма тата мĕншĕн уйăрălма шутланине малтанлăха тĕпчесе палăртма, çавăн пекех тата суда чĕнме тивĕçлĕ свидетельсене палăртма тепĕр мăшăрне чĕнмелле;

в) уйăрăласси пирки ĕçе суда пани çинчен вырăнти хаçатра пĕлтерÿ пичетлесе кăлармалла, хаçатра пĕлтерÿ пичетлеменшĕн укçине уйăрălма шутласа заявлени пană мăшăрĕн тÿлемелле.

25. Халăх сучĕн уйăрălма шутласа çырнă заявлени мĕншĕн панине тĕпчесе палăртмалла тата мăшăрсене килĕштерме тăрăшмалла, çавăнпа та уйăрălакан икĕ мăшăрне те тата кирлĕ чухне свидетельсене те чĕнмелле.

Уйăрălас текен мăшăрсене халăх сучĕнче килĕштерме май килмен чухне, уйăрălас текен мăшăрĕ уйăрălас тесе çырнă заявление çÿлерех тăракан суда пама пултарать.

Çакăн пек йĕрке тăвас: арăмĕпе упăшкине уйăрасси çинчен калакан решение облаçри, крайри, округри, хулари суд е союзлă тата автономиллĕ республикăн Верховнăй сучĕ йышăнма пултарать.

26. Облаçри, крайри, округри, хулари судăн е союзлă тата автономиллĕ республикăн Верховнăй сучĕн, вĕсем арăмĕпе упăшкине уйăрма кирлĕ тесе шутлаççĕ пулсан, çакăн пек тумалла:

а) уйăрălакан мăшăрсенчен кашнин патĕнче хăш ача юлнине, çавăн пекех тата ачасене пăхса усрама ашшĕ-амăшĕсенчен хăшĕ мĕн чухлĕ тÿлемеллине палăртмалла;

б) уйăрălакан мăшăрсем хушшинче пурлăха натурăпа е пайăн-пайăн валеçмелли йĕркене палăртса памалла;

в) уйăрălакан мăшăрсене кашнинех, вĕсем килĕшнĕ тăрăх, арлă-арăмлă пуличчен хушамачĕсене çырса памалла.

27. Суд решенине шута илсе, гражданĕсен пурнăçĕнчи улшăнусене çырса пыракан органсем мăшăрсем уйăрălни çинчен свидетельство çырса параççĕ, ăна панă чухне кашни мăшăрĕн паспортĕнче уйăрălни çинчен паллă тăваççĕ тата вĕсенчен пĕринчен е иккĕшĕнчен те, суд палăртнă тăрăх, 500 тенкĕрен пуçласа 2.000 тенке çити укса шыраса илеççĕ.

* * *

28. Союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене, çак Указра кăтартнисене шута илсе, союзлă республикăсен законĕсене тивĕçлĕ улшăнусем кĕртме хушас.

29. Йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене çак Указ тăрăх пособи памалли тата тÿлемелли йĕркесем çинчен положени хатĕрлесе çирĕплетме СССР Халăх Комиссарĕсен Советне хушас.

30. СССР Халăх Комиссарĕсен Советне гражданĕсен пурнăçĕнчи улшăнусене (арлă-арăмлă пулнине, çураннине тата ыттисене те) çырса пырас ĕçе йĕркелемелли мероприятисене хатĕрлесе çирĕплетме хушас; арлă-арăмлă пулнине, ача çураннине тата ыттине те çыртарнă чухне чаплă та савăнăçлă йĕрке пулмаллине, ăна валли тивĕçлĕ çуртйĕрсем уйăрса, вĕсене лайăх илемлетсе лартмаллине, гражданĕсене хăйсен аллине тивĕçлипе йĕркеленĕ документсем памаллине çав мероприятисене хатĕрленĕ чухне палăртса хумалла.

31. Прокуратура органĕсен, халĕ вăйра тăракан уголовнăй закопсем тăрăх, закона хирĕç пырса аборт тăвакансене, хĕрарăмсене аборт тума хĕтĕртекенсене, хĕрарăмран—ача амăшĕнчен мăшкăласа унăн тивĕçлĕхне чакаракансене, ачасене пăхса усрама кирлĕ алимента юриех тÿлемесĕр тăракансене ответ тыттармалла.

32. Çаксем хăйсен вăйне çухатнă тесе шутлас:

а) СССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Совнаркомĕ 1936 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче «Аборт тума чарасси, ача çуратакан хĕрарăмсене пулăшас ĕçе вăйлатасси, пысăк çемьеллĕ çынсене государство енчен пулăшу памалла тăвасси, ача çуратмалли çуртсен, ача яслисен тата ача садĕсен хисепне ÿстересси, алимент тÿлеменшĕн уголовнăй йĕркепе айăплас ĕçе вăйлатасси çинчен тата арăмĕпе упăшки уйăрăласси пирки калакан законсене хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен» йышăннă постановленин 5, 8, 10, 27 тата 28-мĕш статьисем (СССР Законĕсен пуххи, 1936 çул, № 34, 309 стр.);

б) СССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Совнаркомĕ 1936 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче «Нумай ачаллă амăшĕсене пособи памалли йĕркесем çинчен» йышăннă постановлени (СССР Законĕсен пуххи, 1936 çул, № 59, 448 ст.);

в) СССР Совнаркомĕ, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ВЦСПС 1938 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнче «Ĕç дисциплинине йĕркелемелли мероприятисем çинчен, государствăн социальнăй страховани ĕçне лайăхлатасси тата çак ĕçре закона пăснине хирĕç кĕрешесси çинчен» йышăннă постановленин 14-мĕш статьи (СССР правительствин постановленийĕсен пуххи, 1939 çул, № 1, 1 ст.).

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕ.

Украинăри театр обществи

Украина ССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Киевра Украинăри театр обществине тунă. Оргбюрона республикăри театр тĕлĕшпе ĕçлекен паллă деятельсем кĕнĕ.



ÇАПАÇУРИ ÇАР. Пĕр авиачасть аэродромĕнче.
Укерчĕк çинче: «Ильюшин—2» штурмовик боевой задание пурнăçлама тухса каять.
Сулахайра — самолет конструкторĕ, Сталинла премии лауреачĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ И. Я. Ильюшин.

И. ТОФ АН фотоÿкерчĕкĕ, (ТАСС фотохроники).

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Колхоз председателĕн авторитечĕ тата колхозри ĕçсем

«Красная Армия» колхоза эпир хĕвел тухас умĕн çитрĕмĕр. Ака пуса петĕрнĕ, халĕ колхоз председателĕ çывăрма та пултарать, тесе шутласа пыратпăр. Ялтан çĕртме анисем çине тислĕк турттараççĕ. Çак ĕçри колхозниксенчен пĕри:

— Эсир Анкудинов юлташа кĕтетĕр пулĕ, анчах ăна халĕ ялта тупма çук, вăл уйра, çавăнта шырăр ăна, — терĕ кашт кулараx.

Чăнах та, Анкудинов юлташа эпир уйра тĕл пултăмăр.

Вăл «Красная Армия» колхозра 1931 çултан вараx председатель пулса ĕçлет. Колхоз ĕçне пĕлет, ăна юрататъ. Хăçан мĕнле ĕç тумаллине вăл малтанах пĕлсе тăрать, ăна мĕнле тата камсем тумаллине палăртса хурать. Председатель планне колхозниксем те малтанах пĕлсе тăраççĕ, хушнă ĕçе пĕр пăркаланмасăр, лайăх тăваççĕ. Анкудинов юлташа колхозниксем хисеплеççĕ, ăна шанаççĕ. Председателĕн авторитечĕ вăл колхоза ертсе пыма пĕлнинчен килет.

Егор Петрович Анкудинов юлташ ялсовстри колхозсемшĕн кăна мар, пĕтĕм районшăн кăтартуллă ĕçлет. Иртнĕ çулсенче районра чăн малтан «Красная Армия» колхоз хĕреслĕ акма пуçланă, ун хыççăн çав меслет пĕтĕм районра сарăлнă.

Кăçал çураки вăхăтĕнче шĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене «Красная Армия» колхоз 5 ĕçкунĕнче акса пĕтернĕ, тырăсене яровизациленĕ, машинăпа, хĕреслĕ меслетпе акнă. Вĕсем тикĕс шăтнă, лайăх ÿсеççĕ, çум-курăкĕсене çумлаççĕ. Колхоз кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă илессишĕн кĕрешет, тулла вара кашни гектартан 23 центнер илес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

«Красная Армия» колхозăн лашисем самăр та вăйлă, колхоз ĕçне тума çителĕклĕ, çапах та вĕсем 5 вăкăра кÿлсе çÿреме вĕрентнĕ. Вĕсемпе çуракинче ĕçленĕ, вĕсемпех уя тислĕк кăларнă. Çураки планне пур культурăсем енĕпе те тултарнă хыççăн, ферма çумĕнчи участока 3 гектар тата çар çыннисен çемьисене пулăшмалли фонд валли 1 гектар планран ирттерсе акнă. Çуракине ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн таса çĕртме тума тытăннă, ку ĕçе колхоз районра чи малтан вĕçлерĕ.

«Красная Армия» колхоз ытти ĕçсемпе те малта пырать. Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарса пырать. Çăмарта памалли плана 103 процент тултарнă, сĕт-çу та парса татнă.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Планпа 56 ĕне тумалла, вĕсем 60 ĕне усраççĕ. Кăçал 12 пăру илнĕ тата 4 пăру кĕтеççĕ. Колхозра 10 кĕсре, вĕсенчен 6-шĕ хăмлана тата 4-шĕ хăмламалла. Кунта выльăхсене лайăх пăхаççĕ, выльăхсене лайăх сыхласа усраççĕ.

Колхозра массăллă-ăнлантаруллă ĕç çуллĕ вырăнта тăрать. Агитколлектива парти организацин секретарĕ Базарова юлташ ертсе пырать. Колхозра стена хаçачĕ, бригадăсенче боевой листоксем вăхăтра тухса тăраççĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене кашни кунах тĕплĕн вуласа параççĕ. Партипе правительство постановленийĕсене колхозниксене вăхăтра ăнлантарса параççĕ. Колхозри стахановецсем Романова, Сафронов, Кузнецов, Гаврилов, Федоров коммунистсемпе комсомолецсем — примерлă агитаторсем. Романова юлташ çураки вăхăтĕнче куллнхи нормăна 175—200 процент тултарса ĕçленĕ, Сафронов юлташ та куллен хăйĕн нормине 125 процент тултарнă. Вĕсем сăмахпа кăна мар, ĕçĕсемпе те агитацилеççĕ.

Колхозра бригадăпа бригада, звенопа звено, колхозникпе колхозник ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхоз председателĕ Анкудинов юлташ — колхозри чи лайăх агитатор, пултаруллă организатор. Колхоз халĕ утă çулать тата тырра пухса кĕме те хатĕрленсе çитет. «Красная Армия» колхоз членĕсем кăçал районра кăна мар, республикăра та малти вырăна тухассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Л. РОДИОНОВ.

Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Тырăсем лайăх çитĕнеççĕ

Муркаш районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи çуракипе пысăк ăнăçлăхпа ирттерчĕ, агротехника мероприятийĕсене лайăх пурнăçласа пычĕ. Суртырăрисем аван çитĕнеççĕ, лайăх ĕçленине кура вĕсем çинче çумкурăкĕсем те çукпа пĕрех. Сайра курăнакан çумкурăкĕсене сийĕнчех çумлаççĕ.

Çĕртме тумалли пĕтĕм çĕр çине кашни гектар пуçне вăтам шутпа 35-шер тонна тислĕк тăкнă. Тислĕкне типсе выртма памасăр, сухаласа пăрахнă. Кашни колхозниках хăй килĕнчен çĕртме пуссине 25—40 лава çити тислĕк кăларнă.

2-мĕш çул ÿсекен клевера çулса пухнă хыççăн, вăл вырăна кашни гектар çине 30 лав тислĕк тăкрĕç. Çĕртмере колхозри бригадăсем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлерĕç.

Агроном В. НИКИФОРОВ.

Колхозри çитменлĕхсем пирки ватă колхозник мĕн калать

Филипп Степанович Волков юлташ 67 çулта, вăл 2-мĕш группăри инвалид. Сывлăхĕ начар пирки вăл чылай çул хушши ĕнтĕ колхозăн уйри ĕçĕсене хутшăнаймасть. Анчах та Волков юлташ колхозăн «ĕнси» çинче пурăнакан çын мар. Çуракинче хатĕрленнĕ чухне вăл колхозăн сунисене, урапписене, сÿрисене тата ытти кирлĕ инвентаре пĕчченех юсанă. Вăл кăçал 14 урапа, 20 сÿре тунă. Халĕ Филипп Степанович пиксисех утă çулма кĕреплесемпе сенĕксем тăвать.

— Утă çуласси — пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕç, пĕр кĕрепле çитмесен те ĕç вăраха тăсăлма пултарать. Утта вăхăтра типĕтмелле, капана хывмалла. Эпĕ вăл ĕçе хутшăнмастăп, анчах эпĕ тунă кĕреплесемпе тата сенĕксемпе колхозниксем хаваслăн ĕçлеççĕ. Мĕнле те пулин колхоза пулăшас килет, — тет Филипп мучи.

Колхозри çитменлĕхсем пирки кÿренсе, мучи çапла калать:

— Колхоз председателĕ И. Матвеев, тÿрех калас пулать, начар ĕçлет-ха, вăрçă вăхăтĕнчи пек ертсе пыраймасть. Бригадирсем — хĕрарăмсем, çамрăк, опытсăр. Выльăхсем валли пĕр улăх ути кăна хатĕрлени çителĕксĕр. Колхоз канцелярийĕ умĕнче 4—5 çул каялла йывăç лартни ÿсетчĕ. Йывăçсем хăрса пĕтрĕç, унта халĕ вĕлтрен тĕмĕсем ÿсеççĕ. Сарăсене пухса типĕтсен те, хĕлле валли темĕн чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлеме пулать. Çук, пирĕн пуçлăхсем ун пирки шутламаççĕха...

Чăнах та, «Осоавиахим» колхоз канцелярийĕ вăра йăлтах вĕлтрен ăшĕнче ларать. Тырăсем те çумлă, вĕсене вăхăтра çумлаттарас тесе председатель тăрăшмасть.

— Тăшмана аркатса тăксан, фронтовиксем колхоза килĕç, ун чухне вара Матвеев пек сÿрĕк ĕçлекенсен вĕсен умĕнче лайăххах хĕрелме тивĕ, — тет Ф. С. Волков юлташ.

Вăл тĕрĕс калать. Колхоза Матвеев юлташ пек начар ертсе пыракансене колхозниксем те, фронтран таврăннă тантăшсем те ятлама тивĕç.

В. АКЧЕЛЬ.

Сĕнтĕр районĕнчи «Осоавиахим» колхоз.

Жнейкăсем, кĕреплеллĕ çавасем хатĕрлеççĕ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Районри «Çамрăк колхозник» колхоз тырпулсене пухса кĕме план тунă, ăна бригадăсенче тĕплĕн сÿтсе-явнă. Кашни колхозник хăçан тата ăçта мĕн тумаллине лайăх пĕлет. Колхозра 4 жнейка пур, вĕсене юсанă. Унсăр пуçне 60 çын валли кĕреплеллĕ çава хатĕрлеççĕ.

Колхозра 6 бригада, кашни бригадăра 3 звено. Кăçал тырпулсене пухнă çĕрте уйрăм сдельщинăпа ĕçлеме шутлаççĕ. Кашни звенона уйрăм участок, звено членне уйрăм лаптăк уйăрса парасшăн. Çакăн пек ĕçлени ĕç пахалăхне те, тухăçлăхне те ÿстерет.

Тырă вырнă вăхăтра хирте массăллă ĕçе туса пыма хаçат вулакансене, стена хаçат редакторĕсене уйăрнă. Уйхир ĕçĕсем пуçлансан пĕрлешÿллĕ столовăй уçăлать. Унта ĕçлеме çынсем уйăрнă тата продуктсем çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Карантан хули секторĕнче пирĕн хĕвелтухăç енчен наступлени туса пыракан çарсем Вир шывĕн леш енчи плацдарма аслăлатнă. Унтан çурçĕртерехре союзниксен çарĕсен ытти чаçĕсем Карантан хулинчен Сен-Жан-Де-Дэ ялĕ патнелле каякан çул тăрăх малалла куçнă. Халĕ çак икĕ пĕрпĕрин патнелле пыракан ушкăнсем хуларан 2 мильăра тăраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ июлĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине пулнă çапăçусенче çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă тата тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Пирĕн çарсем фронтăн активлă çапăçусем пыракан пур секторĕсенче те пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ. Пирĕн патрульсем хальхи вăхăтра Ла-Э-Дю-Пюи хулинче. Ку районри куллĕ вырăнсем пурте пирĕн алăра. Вир шывĕн леш енчи плацдарма Сен-Жан-Де-Дэ ялĕ патне çитиччен аслăлатнă. Çак ялпа Карантан хули хушшинче союзниксен çарĕсем Вир-Тот каналĕ патне çитиччен малалла куçнă. Кан хулинчен çурçĕртерехре йывăр çапăçусем хыççăн тăшмана Сент-Конте, Эпрон тата Эрувиль ялĕсенчен хĕссе кăларнă. Пур секторсенче те пире малалла куçма союзниксен авиацийĕн пысăк вăйĕсем хытă пулăшрĕç».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Кан хули çине пуçласа янă наступлени малалла пырать. Йывăр артиллерипе авиаци пулăшнипе пирĕн пехота пĕр чарăнмасăр малалла куçса пырать. Нимĕçсем хулари кашни пÿрте, кашни фермăна опорнăй пункт туса хунă та хаяррăн çапăçаççĕ. Кунтан хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем Ле-Э-Дю-Пюи хулинчен икĕ енĕлле те каллех малалла куçнă. Союзниксен çарĕсем Сен-Жан-Де-Дэ ялĕнчен икĕ миля кăнтăр-хĕвеланăçнелле куçнă.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшманăн чугун çул объекчĕсене, тăшман çарĕсене тата унăн укрепленийĕсене пыра-пыра тапăннă.

Эвре çывăхĕнче бомбăсем тÿрех тивнипе чугун çул туннельне кĕмелли вырăна ишсе антарнă, Нант хулинче пысăк чугун çул кĕперне сиенленĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КАН ХУЛИПЕ ЛА-Э-ДЮ-ПЮИ ХУЛИНЕ ТУРТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 8-мĕшĕнче ирхине Англи çарĕсем Кан хули оборонин позицийĕсем çине наступлени пуçласа янă.

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Англи çарĕсем Кан хулине туртса илнĕ. Американецсен çарĕсен флангĕнче нимĕçсен хирĕç тăмалли вăйлă центрĕ пулса тăнă Ла-Э-Дю-Пюи хулине те туртса илнĕ.

Кан хулине йышăннă хыççăн нимĕçсене Орн каналĕн хĕвелтухăçпе кăнтăр енне хăваласа янă. Нимĕç салтакĕсен темиçе ушкăнне Кан хулинче хупăрласа илнĕ, халĕ вĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Кан хулинче нимĕçсем питĕ нумай мина лартса хăварнă. Нимĕçсем Кан хулине питĕ вăйлă ишсе çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Француз патриочĕсен активлăхĕ

ЖЕНЕВА, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Францирен çапла пĕлтереççĕ: нумаях пулмасть Сона тата Луара департаменчĕсенче француз патриочĕсем Клюни хулипе Турню хулине ирĕке кăларнă. Турню хулинчи нимĕç гарнизонне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Турню хулине туртса илнине пула нимĕçсен Сона шывĕ улăхĕнчи тип çĕр çинчи çулĕсемпе шыв çулĕсене пурне те татнă.

Нимĕçсем хăйсен учрежденийĕсене Парижран Нанси хулине куçараççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсем хăйсен учрежденийĕсене Парижран Нанси хулине куçараççĕ. Чи малтан гестапо архивĕсене тата Тодт организацине (Гитлерăн вăрçă валли ĕçлекен организацине) куçараççĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Росиньяно-Мариттимо хулине тата Кастеллина-Мариттимо хулине туртса илнĕ те кăнтăр енчен Поджибонси хули патне пырса тухнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Ареццо хули патĕнче нимĕçсен темиçе контратакине сирсе янă та малалла куçнă. Тибр шывĕн тури тăрăхĕнчи улăхра акăлчансен 8-мĕш армийĕн Инди чаçĕсем Умбертиде хулинчен çурçĕртерехре малалла куçнă, Монтоне хулипе çыпăçса ларнă ялсене кĕрсе кайнă. Адриатика тинĕсĕн секторĕнче, тăшман хирĕç тăнине пăхмасăрах, союзниксен çарĕсем Озимо хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнелле малалла куçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Силезири, Югославири, Çурçĕр Италири тата Грецири объекчĕсене атакăланă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.200 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: тăшман союзниксен армийĕсене хытă хирĕç тăрса çапăçма пуçларĕ, уйрăмах артиллерипе минометсем вăйлă пеме пуçларĕç. Анчах тинĕс хĕрринчи секторта та, Адриатика секторĕнче те, тăшман пирĕн Анкона хули çине пуçласа янă наступление чăрмантарма тăрăшать пулин те, пирĕн çарсем тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă та малалла куçнă.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Вена районĕнчи нефть склачĕсемпе аэродромĕсене тапăннă. Ытти соединенисем тăшманăн Çурçĕр италири тата çапăçусем пыракан вырăнсенчи çулйĕрĕсем çине, çавăн пекех тата Адриатика тинĕсĕнчи суднăсемпе Югославири объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Тăшманăн 57 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ИТАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ РИМА КУÇАТЬ

БАРИ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Итали премьер-министрĕ Бономи паян çапла пĕлтернĕ: çитес шăматкун Итали правительстви Рима таврăнать. Çавăн пекех тата король наместникĕ принц Умберто тата союзниксен контроль комиссийĕ те Итали столицине куçаççĕ.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсен тата икĕ генералĕ вилнĕ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсен армейски корпусĕн командующийĕ инфантери генералĕ Эмиль Викеде тата армейски горно-стрелковăй корпусĕн командующийĕ генерал Карл Эгльзеер Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче вилнĕ. Вĕсем вилни çинчен ĕнер официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

ГЕРМАНИРЕ ÇАР СЛУЖБИНЕ 1927—1929 ÇУЛСЕНЧЕ ÇУРАЛНĂ ÇАМРĂКСЕНЕ ИЛЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, «Германире халĕ 1927—1929 çулсенче çуралнă çамрăксене темиçе вунă пин çынна çара илнĕ те ĕнтĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ тĕрлĕ фронтсенче çапăçаççĕ. Гитлерла çамрăксене «СС» çарĕсене хушса пама илеççĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЫЛТТĂНА ГЕРМАНИРЕН НЕЙТРАЛЬНĂЙ ÇĔРШЫВСЕНЕ КУÇАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Файненшиэль ньюс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Германин Бернри тата Лисабонри миссийĕсене Германирен ылттăн чылай илсе килни çинчен пĕлтерни Гитлер правительстви Германи вăрçăра поражени тÿсессине ăнланса илчĕ пуль тесе шухăшлаттарать. Нацистсен лидерĕсем хăйсен ылттăн запасне союзниксем Германире кирек хăш вырăнта та тытса илме пултарнине ăнланаççĕ. Çакă вăл Гитлер тата нацистсен ытти пуçлăхĕсем нейтральнăй çĕршывсене тарса кассине пĕлтерет пулмалла. Германи миссийĕсем çав ылттăна ялан усракан вырăнсем пулса тăрас çук пуль. Ăна мисси çурчĕсенчен урăх çĕре куçараççĕ пуль.

Çав ылттăн ан çухалтăр тесе, вăхăтра кирлĕ мерăсем йышăнмалла, тесе çырать хаçат. Нейтральнăй правительствăсем çав ылттăна миссисен территорийĕнчен илсе тухма чарма пултараççĕ, çак правăпа усă курасси нейтральнăй правительствăсен моралĕ тивĕçĕ пулса тăрать. Политикăллă ăслăлăх вĕсене çавăн пек тума хушать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хусанти Н. Э. Бауман ячĕпе тăракан Ветеринари институчĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Вĕренме кĕрес текенсен вырăс чĕлхипе, литературăпа, физикăпа тата химипе испытани тытмалла.

1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенче вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Заявленисене августăн 31-мĕшĕччен памалла. Вĕренме кĕмелли экзамен сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулать. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Заявленисене директор ячĕпе çырмалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат (аттестатне хăйне, копине мар), автобиографи, 3 фотокарточка, çар служби тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла). Паспорта кашни хăй кăтартать.

Адрес: г. Казань, угол ул. Красина и Б. Красной, 5/8.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех илемлĕ, саслă фильм

«НЕБО МОСКВЫ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Чăвашсен государство академи театрĕн Калининăра çĕнĕрен уçăлнă филиалĕнче ĕçлеме артистсем, баянист, художник-декоратор, администратор тата сцена машинисчĕ кирлĕ. Ĕçлеме пырас текенсен çак адреспа васкавлăн заявлени ямалла: с. Калинино, Калининского района, Райклуб.

Чăвашпотребсоюза васкавлăн çакăн пек работниксем кирлĕ: орготдел инструкторĕсем, кадрсен отделен инструкторĕсем, финанс, план тата суту-илÿ отделĕсенче ĕçлекен работниксем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашпотребсоюз, Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00250 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.